26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮНЬ
20
ВЫРСАРНИКУН
127(6364) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ялсовечĕсем уборкăна хатĕрленсе ирттерес ĕçре

Вăрçă ялсовечĕсен государство умĕнчи ответлăхне ытларах ÿстерчĕ. Вĕсем фронтпа тыла апат-çимĕç тăрататакан ялхуçалăхне малалла аталантарассишĕн, фронтпа тăван çĕршыв валли тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, сĕт-çу йĕркеллĕ парса тăрассишĕн совет государстви умĕнче тÿрремĕнех ответ тытаççĕ.

Ялсовечĕсемпе вĕсен председателĕсен ĕçĕнче ял территорийĕнчи колхозсене ăнăçлăн ĕçлеттерме тăрăшасси — тĕп вырăн йышăнса тăрать. «Ялсовет председателĕсем колхозсене ертсе пыракансене хăйсен канашĕсемпе, ĕç опычĕпе, администрациллĕ влаçпа пулăшса тăма тивĕçлĕ».—тесе кăтартса панăччĕ М. И. Калинин юлташ.

Калинин юлташăн кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе, республикăри малта пыракн ялсовечĕсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек урăхлатса çĕнетрĕç, партипе совет правительстви лартнă задачăсене пурнăçлама ял ĕççыннийĕсене анлăн мобилизацилеççĕ.

Çуракине ăнăçлăн ирттертĕмĕр. Ку ĕçре ялсовечĕсем хăйсен хисеплĕ вырăнне йышăнчĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпулăн никĕсне хывнă хыççăнах, вĕсем тырпулсене пăхса çитĕнтерес, ирхи çĕртме тăвас, уйхирсене çумкурăкĕсенчен тасатас, тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçсене активлăн хутшăнчĕç. Шупашкар районĕнчи ял-

[illegible]

Красноармейски районĕнчи Янмурзино ялсоветĕнчи «Янмурзино» колхоз Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутачĕ П. Ефремов юлташ ертсе пырать. Колхоз кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 18-шар центнер тырă илессишĕн кĕрешет. Тырпулсене пĕр тăкак тумасăр вăхăтра пухса кĕртес тесе, Ефремов юлташ колхозниксене уборкăна хатĕрленес ĕçе активлăн явăçтарнă. Паянхи кун тĕлне 3 жнейка юсанă, 32 кĕрепленлĕ çава тунă, 322 çурла шăллатса хунă. Транспорт инвентарĕсем çителĕклех.

Уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлекен ялсовечĕсемпе колхозсем республикăра нумай. Анчах чылай ялсовечĕсем ку ĕçе сÿрĕк хутшăнаççĕ-ха. Красноармейски районри Янкас ялсоветнех илер. Ялсоветĕнче 4 колхоз. Пĕри те уборкăна тивĕçлипе хатĕрленме тытăнман. Ялсоветĕнчи «Волга» колхозри уборка умĕнхи ĕçсем питех те сÿрĕк. Тырпулсене çумкурăкĕ пусса илнĕ. Ĕç дисциплини çирĕп марри не пула, куллен 30 çын е ытларах та ĕçе тухмасть. Уборка машинисене кăçал тимĕрçĕ алли пырса тĕкĕнмен-ха. Колхозра машинăна хирĕçле шухăшсем пурри сисĕнет. Çак çитменлĕхсем ялсовет исполкомĕн председательне Яковлев юлташа нимĕн чухлĕ те пырса тивмеççĕ пулас.

Ялсовечĕсене Яковлев пек, «сводка пухнипе», ертсе пыма çук. Уборкăна хатĕрленес ĕçе конкретно ертсе пыни кирлĕ. Кун çинчен ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕн решенийĕсенче уççăн кăтартса панă. Уборка вăл—вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕвĕн татăклă тапхăрĕ. Ку тапхăрта пĕр вăхăтрах ялхуçалăхĕнчи темиçе ĕçе туса пымалла пулать: тырă вырмалла, государствăна тырă памалла, кĕрхи тырăсене акмалла, кĕрхи çĕртме тумалла т. ыт. те. Çак ĕçсенче черетлĕх пулмалла мар. Çавăнпа хатĕрленÿ ĕçĕсене тĕплĕн тăвас пулать.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ уборка машинисене июлĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр юсаса хатĕрлеме хушаççĕ. Ялсовечĕсен ку постановленине пурнăçлассишĕн мĕншур вăя хурса кĕрешмелле.

Хăшпĕр ялсовет исполкомĕсен председателĕсем хăйсен ĕçне тавçăрса илеймеççĕ-ха. Вĕсем колхозсене пулăшас ĕçне—колхозсене тÿрремĕнех хăйсем ертсе пымалла пек ăнланаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Ялсовечĕсен тата вĕсен руководителĕсен колхозсем уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине тĕтăшах тĕрĕслесе тăмалла, пурнăçа кĕрсе çитеймен е пачах пуçăнман ĕçсене колхозсен руководителĕсене обязательнăй йĕркепе пурнăçа кĕртме хушмалла, вĕсен—ялăн чăн-чăн хуçисем пулмалла.

Уборка ĕçĕсен ăнăçлăхне тырпулсене малтанăсемпе, кĕрепленлĕ çавасемпе вырса пуçтарни, колхозниксемпе колхозницăсене лайăх ĕç условийĕсем туса пани, ĕçе мĕншур колхозниксемпе колхозницăсене явăçтарни, вĕсĕне ирхи кунран пуçласа сĕм тĕттĕм пуличчĕнех е çĕр вырса ĕçлеттерни, хатĕрленÿ ĕçĕсене тĕплĕн туни, агитациллĕ-массăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелени, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса

[illegible]

мелле. Чылай çĕрте ача яслисене тырă вырма тухсан тин уçас шутпа пурăнаççĕ. Ку йăнăш. Ача яслисене халех, çум çумланă вăхăтрах, уçас пулать. Хĕрарăмсем валли колхозра кирек хăçан та ĕç тупăнать. Уйхире ĕçлеме тухайман хĕрарăмсем халĕ михĕсемпе шăналăксем саплама, çÿç-кантăр пыллама, кĕлетсем тата итемсем тасатса дезинфекцилеме пултараççĕ.

Витнĕ итемсемпе сушилкăсем тăвасси çинчен те манма кирлĕ мар. Вĕсене шăпах халь тăвас пулать ĕнтĕ.

Уборка вăхăтĕнче пĕрлештÿллĕ столовăй организацилеме апат-çимĕçсем хатĕрлесе хумалла. Армансем начар ĕçленĕ пирки, çăнăх авăртас ыйту уйрăмах çивĕччĕн тухса тăрать. Армансен хуçалăхне тырă вырма тухаччен юсаса йĕркене кĕртес пулать.

Ялсовечĕсен кунсăр пуçне ытти ĕçсем те тĕмĕн чухлех. Уйхирти тата амбарсенчи тырпула вăрă-хурахран, пушарсенчен сыхлас ĕçе лайăх организацилемелле, колхозсене тырпулсене пухса кĕртмелли ĕç планĕсем тума пулăшмалла т. ыт. те.

Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен ялсовечĕсене, унти партторганизацисене уборкăна кăтартуллăн хатĕрленсе ирттерме вăйлăн пулăшса тăмалла. Ялсовечĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла. Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ республикăри малта пыракан ялсоветне пама куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав тунă. Ялсовечĕсен ялхуçалăхĕнчи мĕншур ĕçсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртессишĕн, уборкăна тимлĕн хатĕрленсе, пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне 143.790 çын хутшăннă

Спортăн массăллă мероприятийĕсенчен пĕри вăл — профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ. Хĕрлĕ Çар ретне тăракан боецсен сывлăхне тĕреклетекенĕ тата тĕрĕслекенĕ спорт пулать.

ВЦСПС-па Комсомолăн Центральный Комитечĕ 1943 çулхи майăн 23-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 14-мĕшне çитиччен профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне ирттересси çинчен йышăннине пирĕн орденлă Чăваш республикинчи комсомолецсемпе ĕççыннисем хапăл туса кĕтсе илчĕç.

Çавăнпа та профсоюз, комсомол тата физкультура организацийĕсем кроса ирттерме тимлĕн хатĕрленчĕç. Ку тĕлĕшпе республикăри комсомол организацине хĕллехи йĕлтĕр кросне ирттернин опычĕ те пулăшрĕ: Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа йĕлтĕрçĕсен хĕллехи кросне аван ирттернишĕн пирĕн организаци комсомолăн Центральный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çакна астуса республикăри комсомол организацийĕ профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне тата аванрах ирттерсе Хĕрлĕ Ялава хамăр алăрах хăварассишĕн çине тăчĕ.

Çавăнпа та профсоюзпа комсомолăн çуллахи 3-мĕш кросне ирттерни республикăра аван результат кăтартса пачĕ.

Çак кроса кăçал республикипе 143.790 çын хутшăннă, вĕсенчен 19.375 çын комсомолецсем. Кроса хутшăннă 143.790 çынтан 132.394 çын ГТО-па БГТО нормисене панă.

Кросăн малтанхи кунĕсенчех республикăри нумай хуласемпе районсенче спортăн çуллахи сезонне тата стадионсене уçнă. Профсоюзпа комсомолăн кросĕ уйрăмăнах Етĕрне, Çĕмĕрле, Шупашкар, Калинино, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче, Шупашкар, Канаш тата Улатăр хулисенче ăнăçлăн иртрĕ.

Çав вăхăтрах кроса Улатăр, Тăвай, Йĕпреç районĕсенче кирлĕ пек организацилемерĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 18-мĕшĕнче фронтра палла улшăнусемех пулман.

* * *

Июнĕн 17-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче тăшманăн войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 10 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен темиçе складне сирпĕнтерсе янă, пĕр чугунçул составне çĕмĕрсе тăкнă, тăшман пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 6 пулемет тата миномет батарейине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Пĕр участокра пирĕн разведчиксен отрячĕ нимĕç траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн пуçланса кайнă тытăçура 50 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ хыççăн разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Мценскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман хăйĕн резервĕсене куçара-куçара пынă, активлăх кăтартман. Çав участокра темиçе кун хушши пынă çапăçусенче нимĕçсем, пĕр вилнисене кăна шутласан та, 2.000 салтакпа офицер ытла çухатнă. Пирĕн подразделенисем тăшманăн 18 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 12 оруди, 18 миномет (вĕсенчен 3-шĕ ултă кĕпçеллисем) тата 40 пулемет ытла пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата пехота хĕçпăшалĕпе персе, 15 нимĕç самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн подразделенисем трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Белгород районĕнче пирĕн снайперсемпе разведка ушкăнĕсем, гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери 4 нимĕç блиндажне, 4 дзота тата пĕр наблюдательнăй пункта ишĕлтерсе антарнă. Сывлăшри çапăçура 3 нимĕç самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре артиллерипе минометсенчен хутран-ситрен хирĕç-хирĕç перкелесе тăнă. Пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем 2 оруди, 4 пулемет точкине пĕтерсе тăкнă, 4 блиндаж, 8 наблюдательнăй пункт ишĕлтерсе антарнă тата тăшман пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн чаçсем 150 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, тăшманăн 3 орудине, 2 минометне тата 6 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçăн снайперĕсем темиçе кун хушшинче 100 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Старшинасем Афанасьевпа Дмитров юлташсем 20-шер нимĕçе вĕлернĕ, ефрейтор Харитонов юлташ 19 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен 3 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче войскăсемпе хĕçпăшал турттарса пыракан 56 вагон ванса кайнă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче нимĕç салтакĕсем нумай пĕтнĕ. Тепĕр отрядри партизансем гитлеровецсен карательнăй экспедицийĕпе çапăçнă чухне 2 нимĕç танкне çунтарса янă, тăшманăн 80 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 327-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă ефрейтор Пауль К. çапла каласа панă: «Февраль уйăхĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче дивизи питĕ пысăк çухатусем тÿсрĕ, ман куç умĕнчех темиçе çĕр салтакпа офицер пĕтрĕç. Юлашки вăхăтра дивизие австриецсемпе чехсене нумай хушса пачĕç. Хăшпĕр подразделенисенче халĕ нимĕçсем ытти халăхсенчен сахалтарах. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсене халĕ нимпе те вăрçă майлă теме çук. Дортмунд çынни—ефрейтор К. нумаях пулмасть хăйĕн шанчăклă тусĕсем хушшинче çапла каларĕ: «Мана пĕрмаях çапла калаççĕ: эсĕ Российăра ху çемйÿне хÿтĕлетĕн, эсĕ фронтра чухне санăн çемйÿне нимле инкек те пырса тивмĕ, теççĕ. Анчах çакă вăл—суя. Эпĕ кунта асап тÿсетĕп, манăн пурнăç кунта кашни минутрах татăлса кайма пултарать, а ман çемье лере, Дортмундра, асапланать, йăлтах вилсе пĕтес хăрушлăх умĕнче тăрать. Манăн кунта нимĕншĕн те вăрçмалли çук».

* * *

Югослави партизанĕсем Румынирен Дунай тăрăх çÿлелле хăпаракан нимĕç баржисен караванне тапăннă. Патриотсем 20 гитлеровеца вĕлернĕ те нефть илсе пыракан 4 баржăна вут тивертнĕ.

Июнĕн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле палла улшăнусем те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр чаçăн артиллерисчĕсем тăшман пехотин колоннине персе сапаласа янă. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксем 3 нимĕç блиндажне вĕсенче пулнă гитлеровецсемпе пĕрлех сирпĕнтерсе янă.

* * *

Мценскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри пĕр участокра пирĕн подразделенисем çапăçса пырса малалла куçнă та меллĕрех рубежа йышăнса илнĕ. Çав рубежшăн пынă çапăçура нимĕçсен 190 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем тăшмантан 3 миномет, 5 пулемет, темиçе вуншар винтовка тата автоматсем тытса илнĕ. Ытти участоксенче тăшман çине артиллерирен персе тăнă. Пирĕн артиллери нимĕç пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра нимĕç разведчикĕсен отрячĕ Çурçĕр Донец шывĕ урлă каçма хăтланнă, анчах ăна пирĕн боевой хурал вăхăтра асăрханă. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, тăшман разведчикĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лисичанск районĕнче пĕр чаçăн разведка тăвакан группи тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та нимĕç блиндажĕсене атакăланă. Тытăçура пирĕн боецсем 40 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Унтан, трофейăсем тытса илсе, тыткăна илсе, пирĕн разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи пĕр участокра пирĕн наблюдательсем нимĕçсен оборона сооруженийĕсем тăвакан салтакĕсен пысăк ушкăнне асăрханă. Артиллерипе минометсенчен персе, пирĕн Микешин юлташ ертсе пыракан подразделенири боецсем 60 гитлеровеца çити вĕлернĕ.

Пирĕн летчиксем тăшман аэродромĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахса, нимĕçсен чылай нумай самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Тăшман аэродромĕсем тĕлĕнчи сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 11 истребительне персе ÿкернĕ.

* * *

Житомир облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ район центрне вăркăнса кĕнĕ те унти нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Совет патриочĕсем нимĕç комендантне тата темиçе вуншар гитлеровеца вĕлернĕ. Партизансем 5 пулемет, 2 миномет, 65 винтовка тата 4 пин патрон тытса илнĕ. Житомир облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕç оккупанчĕсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав отрядри партизансен ушкăнĕ юханшыв урлă хывнă чугунçул кĕперне сирпĕнтерсе янă. Чугунçулăн çав участокĕнче вара поездсем нумай вăхăта çÿреме пултарайман.

* * *

Нимĕçсен 45-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 133-мĕш полкăн 10-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Антон Штельпхамер çапла каласа панă: «Юлашки уйăхсенче нимĕç çарне нумай ватăрах çынсене тата ĕлĕк çар службинчен хăтарнă чирлĕ çынсене нумай илнĕ. Польшăпа Чехире вырнаçнă нимĕç гарнизонĕсенче салтаксем хушшинче инвалидсем нумай. Крумаура эпĕ хăрах куçлă салтака куртăм. Унăн сăмахĕ тăрăх, вăл киле яма ыйтса тăста та çитнĕ, анчах та ăна киле ямаççĕ. Российăна хирĕç вăрçă пуçланнă чухне нимĕç салтакĕ Германия çĕнтересси не ĕненсе тăнă. Вăл нимĕç çарĕ Европăри нумай çĕршывсене пĕрин хыççăн теприне оккупацилесе пынине курнă. Çара вăрçăччен илнĕ салтаксем халь сахал тăрса юлнă. Хальтерех илнĕ салтаксем нимĕç çарĕ хăй пĕтесси патне çывхарса пынине кураççĕ».

* * *

Сен-Кантен районĕнче француз железнодорожникĕсем нимĕçсен çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Крушени вăхăтĕнче 30 нимĕç ытла вилнĕ. Фенья çывăхĕнче ирĕклĕ стрелоксем нимĕç поездне сирпĕнтерсе янă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче нумай гитлеровец пĕтнĕ. Юсакан командăсем çула вичĕ çĕр хушши юсанă. Лионра патриотсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен çар пурлăхĕ тунă складне çунтарса янă.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене тапăнни

Июнĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата 18-мĕшĕнче пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене тапăннă. Донбассри пĕр аэродромра тата тăшманăн Ленинград çывăхĕнчи аэродромĕнче вырнаçнă нимĕç самолечĕсем çине уйрăмах нумай бомба пăрахнă. Бомбăсем çурăла-çурăла кайни тăшман самолечĕсем тăракан вырăнсенче, самолетсем вĕçсе хăпармалли çулсем çинче тата ангарсемпе складсен районĕсенче палăрнă. Пушарсем нумай тухнă. Çав пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Бомбăсем пăрахнине пула çĕр çинче нимĕç самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 3 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Совет Союзĕнчи мĕншур халăхсен представителĕсем тăшманпа хастарлăн çапăçаççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: Гварди сержанчĕн Г. Ф. Лысенкăн противотанковăй шăшал расчечĕсен отделенийĕнчи бронебойщиксем (сулахайран сылтăмалла)—калмык Дава Цевединов, армянин Арминак Богдасаров, сержант украинец Г. Лысенко, башкир Афлян Тарафудинов тата вырăс Семен Антипкин. Хастарлă воинсем тăшман танкĕсен темиçе атакине сирсе янă, 2 танкне персе çĕмĕрнĕ.

К. ЛИШКО фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

Сапер Артеменко танка епле çăлса хăварнă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Танковăй батальон атакăна кайнă. «Т—34» танксем вăрмантан тухнă та нимĕç позицийĕсем патне вăркăннă. Вĕсемпе пĕрле саперсем пынă. Çав участокра танксем саперсемсĕр малалла кайма пултарайман. Тăшман укреплениийĕсем умĕнчи вырăна йывăр снарядсемпе авиабомбăсем пĕтĕмпех шăтарса пĕтернĕ. Саперсен танксем умĕнче пырса, вĕсене хăрушă мар çулсем кăтартса пымалла пулнă.

Командир машини умĕнче опытлă сапер Артеменко пынă. Тăшман пулеметсенчен вăйлăн персе тăнине шăхмасăрах, вăл малалла шунă е пĕтĕм ÿт-пĕвĕпе тăрса утнă, хăйĕн танкне минăсем хурса тухнă вырăнсем хушшипе илсе пынă.

Малти танк темиçе минута иртсен нимĕç оборонин пĕррĕмĕш линине татнă. Артеменко танк çине сиксе ларнă. Сасартăк вăл хăйĕнчен сулахайри вĕтлĕхре засадăра ларакан икĕ нимĕç салтакне асăрханă. Çав салтаксем танк çывхарасса кĕтсе выртнă, ăна пĕтерсе тăкасшăн пулнă. Сапер лару-тăру мĕнле иккенне пĕр самантра тавçăрса илнĕ: сылтăмра—чăнкă вар, сулахайра—шурлăх, апла пулсан варрипе кăна пыма пулать. Артеменко танк çинчен сиксе аннă та нимĕçсем çине персе янă. Нимĕçсенчен пĕри вилнĕ. Иккĕмĕшĕ танк еннелле темскер ывăтнă. Сапер çакна асăрханă. Гитлеровец командир машини çине магнитлă мина ывăтнă иккен. Артеменко иккĕмĕш фашиста вĕлернĕ те тепĕр секундăран каллех танк çине сиксе ларнă. Магнитлă минăна тыткăçĕнчен тытса танкран хăвăрт хăпса илнĕ те пĕтĕм вăйпа айккинелле ывăтса янă. Мина снаряд чавнă шăтăкра çуралса кайнă.

Çапăçу пĕтсен, танковăй батальонăн командирĕ Артеменко сапера пырса тупнă та ăна хĕрÿллĕн чуптуса илнĕ.

Хастарлă сапера вара Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

И. ДЕНИСОВ.

Колхозниксем икĕ нимĕç летчикне тыткăна илни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Сывлăшри çапăçура пирĕн летчиксем икĕ нимĕç самолетне персе ÿкернĕ. Вĕсенчен пĕри «Пролетарский путь» колхоз çывăхĕнче хире ÿкнĕ. Икĕ летчик, парашютпа анса, пытанма хăтланнă, анчах вĕсене трактор бригадин бригадирĕ—отечественнăй вăрçă инвалидĕ Сергей Сергеевич Тимохин тата колхозница Ирина Пилюкова тытса чарнă. Ку ĕç акă мĕнле пулнă.

Ирхине Тимохин хăйĕн бригади ĕçленĕ хире кайма тухнă. Укăлча хапхинчен тухсанах вăл пĕлĕтсем хушшинчен сунакан икĕ моторлă самолет вĕçсе тухнине тата сывлăшра икĕ парашют сарăлса кайнине курнă. Бригадир ку нимĕç летчикĕсем аннине тавçăрса илнĕ. Пĕр парашютисчĕ ĕнтĕ çĕр патнех çывхарса пынă, иккĕмĕшне çил таçта хир урлă илсе кайнă. Тимохин пĕррĕмĕш парашютист аннă вырăна чупса кайнă.

—Çĕкле аллуна!—тесе кăшкăрнă вăл.

Гитлеровец хăраса аллисене çĕкленĕ. Тимохин пĕр самантрах гитлеровецăн пистолетне кобуринчен кăларса илнĕ те гитлеровеца тĕллеснĕ.

— Шагом марш!—команда панă Тимохин, гитлеровеца вăл пĕр сукмакпа илсе кайнă.

Часах Тимохина пулăшма виçĕ колхозница тата ялхуçалăх артелĕн председателĕ чупса пынă.

Иккĕмĕш летчика кÿршĕри ял патĕнче тытнă. Колхозница Ирина Пилюкова çĕртме сухи тунă. Унпа пĕрле темиçе çамрăк пулнă. Аяла анакан парашютиста курсан, вĕсем çав парашютист анакан çĕре чупса кайнă. Гитлеровец пистолетне кăларнă. Ирина Пилюковăпа унăн юлташĕсем пĕр тĕме хыçне выртнă. Темиçе çамрăка колхозница халăха чĕнме янă, хăй нимĕçе асăрхаса тăнă. Часах колхозниксем чупса пынă, хăшĕ сенăк, хăшĕ пуртă, хăшĕ патак тытнă. Вĕсем нимĕçе пур енчен те çавăрса илнĕ те унăн хĕçпăшалне тытса илнĕ.

Тыткăна илнĕ икĕ летчика та колхозниксем пĕр чаçăн командованийĕ аллине панă.

Майор В. СВЕТЦОВ.

Пирĕн землячсем

Майор Лаврентий Катков

Кунĕпех хаяр та юнлă çапăçу пынă. Артиллерирен хирĕç-хирĕç вăйлăн персе тăнă хыççăн, совет танкĕсем çапăçу хирне тухнă. Танксем хыççăн пехотинецсем пынă. Пирĕн земляк Лаврентий Филиппович Катков командир пулса ертсе пыракан танк çапăçăва малтан кĕнĕ. Младши политрук Катков оруди патĕнче пулнă. Вăл нимĕçсен позицийĕсем çине умлăн-хыçлăн вут-хĕм тăкнă. Инçех те мар, тăшманăн дзочĕ сывлăша сирпĕнни курăннă. Çав вăхăтра старши сержант Гуринпа лейтенант Грешихин тăшманăн пехотине пулеметсенчен ăшаланă. Совет танкĕсем тăшмана малаллах хĕснĕ.

Танк водителĕ старши сержант Арютин хăйĕн машинине пĕлсе, хăюллăн илсе пынă. Нимĕçсем инçех те юлман — совет танкисчĕсем вĕсене курса тăнă. Катков юлташ хĕрсе кайнă, вăйлăнрах снарядсем тăкма тытăннă. Гитлеровецсем хăйсен ĕçĕ ăнăçманнине часах тавçăрса илнĕ. Катков тăшмансем хăйсен орудине вăрманалла куçарнине асăрхать. Катков пĕрре персе нимĕçсен орудине аркатать.

Темиçе сехет хушши пынă çапăçура Катков юлташăн танк экипажĕ хаяррăн çапăçса тăшманăн танка хирĕç пемелли 7 орудине пĕтерсе тăкнă, çирĕмрен кая мар огневой точкине пусарнă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерсене 100 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Çак вăхăтра пирĕн пехотинецсем çитнĕ. Вĕсем хăюллăн атакăна кĕнĕ.

Совет танкисчĕсем каллех малалла çул тытнă. Вĕсем нимĕçсем çирĕпленсе ларнă Н. ялĕ патне çывхарнă. Чăваш ачи Лаврентий Катков нимĕçсем çак ялта вăйлăн çирĕпленсе ларни çинчен сведени илнĕ. Вăл нимĕçсен чердаксене пытанса ларнă автоматчикĕсене, подвалсенчен хаяррăн персе тăракан пулеметсене асăрханă. Катков гитлеровецсем çине аса-çисĕмлĕн вут-хĕм тăкнă, лейтенант Грешихин пулеметран тăшманăн автоматчикĕсем валли куччене ăсатнă, нимĕçсем сасартăк йăвашланнă. Катковсен танкĕ яла чи малтан çитсе кĕнĕ. Танкистсем ялта пытаннă гитлеровецсене шыраса тупса, хăвăрт пĕтерсе тăкнă. Танк водителĕ Арютин пĕр килте нимĕç автоматчикĕсемпе пулеметчикĕсем çирĕпленсе ларнине курнă та Катковран çав çурт çине танкпа пырса кĕме ирĕк ыйтнă.

Мотор çĕнĕ вăйпа кĕрленĕ. Танк пÿрт стенисем çумне хаяррăн пырса çапăннă. Хăрушă сас кисренсе кайнă, пÿрт ишĕлсе аннă. Пÿртĕн ванчăкĕсем хушшинче 30 фашист хăйсен вилĕмне тупнă.

Яла пехотинецсем çитнĕ. Танкистсемпе пĕрле вĕсем часах çак яла гитлеровецсенчен ирĕке кăларнă.

Çапăçура паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Лаврентий Филиппович Каткова правительство Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă.

Çапăçура пысăк пултарулăх кăтартнăшăн Катков юлташа халь майор званине панă, ăна танксен батальонĕн командирĕ тунă.

* * *

Çак кунсенче Лаврентий Катков хăйĕн тăван ялне — Тузи Чуракассине (Шăхасан районĕ) килсе кайрĕ. Вăл колхозниксене хăйĕн боевой ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа кăтартрĕ, тăван ялйышĕ умĕнче тăшмана хирĕç тата та хăюллăнрах çапăçма тупа турĕ.

Колхозниксем те мĕншур ĕçе вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса пыма, фронт пулăшассине вăйлатма сăмах пачĕç.

Василий ВЕСЕЛОВ.

ВЦСПС-па СССР Çăмăл Промышленность Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе СССР Союзĕн Çăмăл Промышленность Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ÇĔМĔРЛЕРИ ЗАВОДА (директорĕ Шустин, парторганизаци секретарĕ Розенберг, завком председателĕ Павлова юлташсем) Пĕтĕм Союзри ИККĔМĔШ ПРЕМИЕ пама йышăннă.

Вырăнти тата коопераци промышленность работникĕсен канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта райсовет, горсовет исполком председателĕсен вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕсен, райплан тата промартель председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлура вырăнти тата коопераци промышленноçĕн 1943 çулăн пилĕк уйăхĕнчи ĕçĕсем çинчен Чăваш АССР Госпланĕн председателĕ Тощев юлташ доклад туса пачĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен,—тет докладчик,—эпир 1943 çулхи çурçул планне ăнăçлăн пурнăçларăмăр, хăшпĕр артельсем вăрçăн йывăр условийĕсене пăхмасăр производство планне 230—250 процент тултарчĕç.

Тощев юлташ доклачĕ тăрăх пренире 14 çын тухса каларĕ. Вĕсем пурте хăйсен ĕçри опычĕсене кăтартса парса, малашнехи задачăсем çинче чарăнса тăчĕç. Канашри горпромкомбинат председателĕ Шлапак юлташ юлашки вăхăтра вĕсен комбиначĕ уйрăмах лайăх ĕçлесе пыни çинчен каласа пачĕ. Шаров юлташ (Кувакино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕн управляющийĕ) çуллахи вăхăтра апат-çимĕç продукчĕсене хатĕрлесси çинчен каларĕ.

Калинкина юлташ (Наркомпищепром) халĕхи вăхăтра районри апат-çимĕç комбиначĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинче чарăнса тăчĕ.

Юлашкинчен ВКП(б) Обкомĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен секретарĕ Репкин, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташсем сăмахсем тухса каларĕç.

Канашлу вырăнти тата коопераци промышленноçĕн работникĕсене чĕнсе çыру йышăнчĕ.

Пĕр-перин паха опытне вĕренеççĕ

Шупашкарти «Кожупряжь» артель коллективĕ (председателĕ Плетнева юлташ) Мускаври промкоопераци работникĕсен чĕнĕвне сӳтсе-явса, хăй çине татăклă обязательствăсем илчĕ: çур çулхи плана срокчен тултармалла, планран ирттерсе 10 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла, продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент чухлĕ чакармалла, кашни ĕçлекенĕн пĕр тикĕс, талăкри график тăрăх ĕçлесе пымалла, производствăри технологи дисциплинине çирĕппĕн пăхăнса тăмалла.

Халĕ рабочисемпе работницăсем çав обязательствăсене чыслăн пурнăçласси тĕлĕшĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне артель ĕç планне 55 процента яхăн пурнăçларĕ.

Июнь уйăхĕнче стахановецсемпе ударниксен йышĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Корнилова, Федорова, Ефимова, Колпакова юлташсем иртнĕ уйăхсенче производствăра кайрах юлса ĕçленĕ, задание 100 процентран мала тултарайман. Халĕ вĕсем кашни кунах задание 143—150 процент тултарса пыраççĕ. Кунти рабочисемпе работницăсем, стахановла ĕçĕн меслечĕсемпе усă курса, пĕр-перин паха опытне пута илсе ĕçлеççĕ. Çапла ĕçленипе артель çак уйăхра ĕç тухăçлăхне 3 процента яхăн ӳстерчĕ.

А. ИВАНОВА

Квалификациллĕ рабочисем пулассишĕн

Шупашкарти ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем производствăра квалификациллĕ рабочисем пулассишĕн тăрăшаççĕ. Мастерсем вĕрентнине яланах асра тытса, ĕç нормисене кулленех ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ.

— Пирĕн аттесемпе пиччесем фронтра çапăçаççĕ. Пире вĕсем аслă сынсем пулма хушса хăварнă. Эпир вĕсен наказĕсене пурнăçлама тивĕçлĕ, — теççĕ вĕсем.

Хăйсем çамрăк пулин те, ĕçре ватăтти сынран кая юлмаççĕ. Вĕренекен çамрăксем Т. Хрисанова, А. Фомина, К. Мамагина, Г. Архипов юлташсем май уйăхĕнчи задание 200 процент пурнăçларĕç. Иртнĕ уйăхсенче плана тултарса ĕçлеймен вĕренекенсем те хастарлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Сăмахран, А. Кабанов, Г. Максимов вĕренекенсем май уйăхĕнчи ĕç планне 110 процента çити пурнăçларĕç. Кун пек тĕслĕхсем татах та нумай.

Хăшпĕр группăра вĕренекен ачасем ситес кунсенчех шкултан квалификациллĕ рабочисем пулса тухаççĕ. Вĕсен фабрикăсемпе заводсенче ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем шкултан вĕренсе тухсан, производствăра пысăк тухăçлăн ĕçлеме шанчăк параççĕ.

Кашкăр çурисем тытнă

Канаш лесхозĕн Паттесски дачинче Е. Никифоров виçĕ кашкăр çури тытнă. Вĕсене тиссĕшне те «Охотсоюза» кайса панă. Никифоров юлташ «Охотсоюз» паракан укçана оборона фондне хывнă.

Агитациллĕ-массăллă ĕç нумай пулăшрĕ

Пирĕн район, ялхуçалăх ĕçĕсенче çулсерен юлса пынăскер, кăçалхи çуракине ăнăçлăн вĕçлерĕ. Иртнĕ çул районри чылай колхозсем çурхи тырăсене акас ĕçе июлĕн 1-мĕшĕччен тăснă пулсан, кăçал вара майăн 20-мĕшĕ тĕлне пур колхозсем те акса пĕтерчĕç. Малта пыракан колхозсем („Совет“, „Восход“, „Трудовик“, „КИМ“, „Большевик“) ака ĕçĕсене агротехникăллă кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕç. „КИМ“ тата „Большевик“ колхозсем çуртыррисене пĕтĕмĕшпех сеялкăпа акрĕç.

Тӳрех калас пулать, çуракине ăнăçлăн ирттерме, район юлса пырассине пĕтерме агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркелени пулăшрĕ. ВКП(б) Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕн решенийĕсене сӳтсе-явнă хыççăн, партипе комсомолăн районри пуçламĕш организацийĕсем хăйсен умне çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухас, ăна кĕске срокра, лайăх пахалăхпа ирттерес задача лартрĕç. Çак задачăна пурнăçлассишĕн вĕсем мĕнпур вăя, пултарулăха хурса кĕрешрĕç. Коммунистсемпе комсомолецсем, агитколлективсен руководителĕсем ялхуçалăхĕнчи социализмлă ăмăртăва районри колхозниксемпе колхозницăсене анлăн явăçтарчĕç. Уйхир бригадисемпе колхозсем, пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухса, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ юлса пыракан колхозсем çине ытларах çаврăнса пăхрĕç, вĕсене куллен пулăшса тăчĕç. Партипе комсомолăн районри организацийĕсем агитациллĕ-массăллă ĕçе колхоз производствипе таччăн çыхăнтарса пычĕç, колхозниксем хушшинчи ĕç дисциплинине çирĕплетесси çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхрĕç. Пĕтĕмĕшпе илсен çаксем вара кăçалхи çуракин ăнăçлăхне татса пачĕç.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркелес тесе, ВКП(б) райкомĕ çураки вăхăтĕнче туса ирттермелли агитациллĕ-массăллă ĕçĕн планне тĕплĕн шутласа турĕ. Агитколлектив руководителĕсен тата партипе комсомол организаци секретарĕсен семинарне ирттертĕмĕр. Унта çураки вăхăтĕнчи агитациллĕ ĕçĕн задачисем çинчен тата ку ĕçе мĕнле йĕркелемелли çинчен тĕплĕн сӳтсе-яврăмăр.

Агитколлективсем семинар хыççăн хĕрӳ ĕçе пуçăнчĕç. Çуракине хатĕрленнĕ тата ăна ирттернĕ вăхăтра колхозсенче 364 агитатор тата калаçу ирттерекенсемпе вулавçăсем 400 çын ытла ĕçлерĕç. Вĕсем 1.488 хутчен хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа пачĕç. 1.329 калаçу ирттерчĕç, 132 хутчен докладсем турĕç. Художествăллă пултарулăх кружокĕсем 34 спектакль лартса пачĕ. 18 вулав çурчĕ куçса çӳрекен библиотекăсем организациленĕ.

Агитколлективсем колхозниксене тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлеме мобилизацилесе пычĕç. Аслă Чемен ялсоветĕнчи агитколлектив (руководителĕ Р. Исаева юлташ) агитациллĕ-массăллă ĕçе уйрăмăнах лайăх йĕркелерĕ. Çавна май ялсоветри „Париж Коммуни“, „Трудовик“ колхозсем çурхи тырăсене вăхăтра акса хăварчĕç. „Красный Флот“ колхозри 17 агитатор (агитколлектив руководителĕ коммунист В. Антонов юлташ) большевикла хĕрӳ сăмахпа колхозниксене колхоз хирĕсенче хĕрӳллĕн ĕçлеме хавхалантарса пычĕç. Ку колхоз халиччен питех те юлса пынă пулсан, çураки ĕçĕсене кăçал кăтартуллăн ирттерчĕ. Агитаторсем çураки вăхăтĕнче 42 номер боевой листок кăларчĕç.

Районри агитаторсем агитациллĕ-массăллă ĕçре мĕнпур майсемпе усă курма тăрăшрĕç. Стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăни, вулав çурчĕсем агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркелени, Хисеп хăмисемпе тата кăтарту хăмисемпе усă курни колхозниксен ĕçлес хастарлăхне ӳстерсе пычĕ.

Çураки вăхăтĕнче колхозсенче 158 номер, бригадăсенче 1.615 номер стена хаçачĕ кăларнă. Стена хаçачĕсене уйра ĕçлекен колхозниксем юратса çырса тăчĕç. Стена хаçачĕсен редакторĕсем çĕнĕ номерсене хире илсе тухса колхозниксене вуласа паратчĕç. Уйрăмăнах Шаймурзино колхозĕнче ку ĕçе аван йĕркеленĕ. Унта кашни бригадăрах 7-шер номер стена хаçачĕ кăларнă.

Кунсăр пуçне районра 42 хаçат витрини пур.

Вулав çурчĕсенчен уйрăмăнах Аслă Чеменри, Баишеври, Кокшановăри вулав çурчĕсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем куçса çӳрекен библиотекăсем, справка сĕтелĕсем организацилерĕç.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе витĕмлĕн те пахалăхпа туса пыни тырпулсене уйран вăхăтра пуçтарса кĕнĕ чухне те ĕçĕн ăнăçлăхне татса парать. Çавăнпа эпир ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш Пленумĕн решенийĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçлассишĕн, агитациллĕ-массăллă ĕçĕн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемшĕн çине тăрса кĕрешетпĕр.

И. ДОЛГОВ,
ВКП(б) Первомайски райкомĕн секретарĕ.

Комсомолăн ертсе пыракан работникĕсен республикăри семинарĕ

Июнĕн 16-мĕшĕнче Шупашкарта ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен иккĕмĕш секретарĕсен тата инструкторĕсен 5 кунлă семинарĕ пуçланнă. Семинар участникĕсем «Комсомол — большевикла партин шанчăклă помощникĕ тата боевой резервĕ», «Комсомол государство тата хуçалăх строительствинче», «Çамрăксем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕç», «Комсомол организацийĕсен шалти ĕçĕ», «Çарпа физкультура ĕçĕ» тата «Комсомолăн шкулти ĕçĕсем» çинчен докладсем итлеççĕ.

Докладсене ВЛКСМ обкомĕн секретарĕсемпе ВКП(б) Обкомĕн лекторĕсем тăваççĕ.

Июнĕн 18-мĕшĕнче семинарта ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ — республика умĕнче тăракан хуçалăхпа политика задачисем тата вăл задачăсене пурнăçлас ĕçе комсомол организацисем хутшăнасси çинчен доклад туса пачĕ

Семинар июнĕн 21-мĕшĕччен пырать.

Республика уйхирĕсенче

ПĔР ÇУМ ТА ХĂВАРМАСТПĂР

ЕЛЧĔК. «Новый путь» колхоз кăçал çум çумлас ĕçе вăхăтра тытăнчĕ. Паянхи куна пĕтĕмпе ку колхоз 337 гектар çум çумларĕ. Вăл шутран 110 гектар тулă, 101 гектар çĕлĕ, пăри 30 гектар, хура тулă 5 гектар, пăрçа 30 гектар тата ыт. те çумланă.

Çум çумлас ĕçре колхозăн 2-мĕш бригади малта пырать. Унăн бригадирĕ Волков юлташ çум çумлакан колхозниксене каннă вăхăтра хаçатсем вуласа парать, тĕрлĕрен ларçу-тăрупа паллаштарать.

Пĕрремĕш бригадăри О. Порфирьева, А. Дудкина, 50 çулхи Королькова, иккĕмĕш бригадăри 60 çулхи А. Осипова, Е. Горшков колхозницăсем хăйсен куллен нормине 150-шар процент тултараççĕ.

П. ЩЕРБАКОВ.

ÇĔРТМЕ СУХИ КАЯ ЮЛАТЬ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, (Хамăр корр.). Районра малта пыракан «12 лет Октября», «Янмурзино», «Правда», «Малалла», «Унгострой» колхозсем çĕртме сухи тăвас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен планне тултараççĕ те ĕнтĕ.

Анчах район, пĕтĕмĕшпе илсен, çĕртме тăвас тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлет. Сăмахран, «Большевик», «Венера» колхозсем паян куна çитсе те пĕр гектар та çĕртме туман. Район план тăрăх 6.000 гектар çĕртме сухи тумалла пулсан, паянхи куна 2.340 гектар çеç сухаланă.

Район çум çумлас тĕлĕшпе те начар ĕçлет. Паянхи куна пурĕ те 1.500 гектар çеç çумланă. «Родина», «Новая сила», «Красная горка» тата ытти колхозсем халĕ те çум çумлама тытăнман-ха.

СИЛ. ШАДИН.

Иваново облаçĕнчи колхозниксен чĕнĕвне ырласа

ТĂВАЙ. (Хамăр корр.). Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Иваново облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен чĕнĕвне хавассăн кĕтсе илчĕç. Колхозниксем ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма колхозăн фермисенче планран ирттерсе 2 ĕне, 3 сурăх, 5 сысна, 20 пуç чăх-чĕп çитĕнтерме йышăнчĕç. Халĕ çав выльăхсене уйрăм апат çине тăратнă.

Енĕш Нăрвашри „Красная Чувашия“ колхоз членĕсем 2 ĕне, 2 сысна, 3 сурăх тата чылай чăх-чĕпсем çитĕнтереççĕ. Çавăн пекех Нăрваш Кошкинчи „Искра Ильича“ колхозри колхозниксемпе колхозницăсем те Иваново облаçĕнчи колхозниксен чĕнĕвне хăйсен аслă пухăвĕнче сӳтсе-яврĕç, хăйсен фермисенче планран ирттерсе ĕрчетнĕ выльăх-чĕрлĕх шутĕнчен Сталинград облаçĕнчи колхозсем валли 2 пуç măйракаллă шултăра выльăх, 5 сурăх тата 3 сысна уйăрса пама пулчĕç. Кунсăр пуçне, колхозниксем кашниех хăйсен килĕсенче пĕрер пуç выльăх е чăх-чĕпсем сахăртса пама килĕшрĕç.

Районри ытти колхозсенче те çак паха пуçарăва хавассăн сӳтсе-яваççĕ.

ТАСС опроверженийĕ

Германипе Итали хаçачĕсем темиçе кун ĕнтĕ пĕр суя заявление тăрăшса сараççĕ. Çав заявление Совет Союзĕн США-ри посолĕ Литвинов юлташ Тегеран урлă кайнă чухне тунă пулать. Унта Совет Союзне Эгей тинĕсĕпе Адриатически тинĕс патне тухма май парас тесе, Хорватие, Словение, Истрие тата Далмацие пĕрлештерсе, Совет Союзĕн протекторатĕнче тăракан славян государстви тăвасси çинчен каланă пулать.

Литвинов юлташ ТАСС-а çапла пĕлтерме полномочи панă: вăл Тегеранра та, США-ран Совет Союзне килнĕ чухне нимӗнле ытти пунктра та нимĕнле политикăллă заявлени те туман, журналистсене нимĕнле интервью та паман, вĕсемпе тĕл пулман, малта кăтартнă ăссăр та кулăшла пĕлтерӳ вăл Геббельс господинăн суя хыпарсен фабрикинче е çав фабрикăн пĕр-пĕр филиалĕнче хатĕрлесе кăларнă продукт пулса тăрать.

Нимĕç авиацийĕ Волхов хулине тапăнни

Июнĕн 18-мĕшĕнче нимĕç самолечĕсем икĕ хутчен Волхов хулине тапăнма хăтланнă. Тăшман самолечĕсен пысăк пайне сапаласа янă, хула çине вĕçсе кĕме паман. Тăшманăн кĕрсе кайнă уйрăм самолечĕсем бомбăсем пăрахнă, вĕсем чугунçула сиенленĕ. Промышленность объекчĕсемпе ытти объектсем сиен курман. Тапăнăва сирсе янă чухне пирĕн летчиксем 19 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне тата зениткăй артиллери тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ. Çапла вара, тапăнăва сирсе янă чухне пĕтĕмпе 24 нимĕç самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 4 самолет пĕтнĕ.

Ют çĕршывсенче



США-ра ТИНĔС ÇАР СУДНИСЕМ ТУНИ

Укерчĕк çинче: «Танконосеца» шыва антараççĕ. Ăна танксем турттарма тунă. Танксене карапăн трюмĕсене тата палуба çине вырăнаçтарса лартаççĕ.

ФРАНЦИРИ ВЫÇЛĂХ

ЖЕНЕВА, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Вишири радио (ăна нимĕçсем контрольлесе тăраççĕ) Францире продовольстви тĕлĕшпе ĕç вĕсне çитиччен япăхлансах кайнине йышăнать: Нумаях пулмасть Вишири радио çапла пĕлтернĕччĕ: Франция выçă пурăнать. «Француз ачисем выçă аптăраççĕ», тенĕ Вишири радион обозревателĕ. Монпелье хулинчи (Францин кăнтăр пайĕнчи) радиостанци панă обзорта çапла каланă: нимĕçсем Франције оккупациленĕренпе «Францире тулă акнă çĕр пĕр миллион гектар чухлĕ чакнă. Тулă халь вăрçăчченхинчен 25 миллион центнер сахалтарах пулать. Апла пулин те, оккупаци влаçĕсем, Францире продовольстви тĕлĕшпе пурнăç питĕ йывăррине пăхмасăрах, хресченсене пĕтĕм тырран запасне Германие ăсатмашкăн пама хушаççĕ. Вĕсем çапла хăратаççĕ: нимĕç влаçĕсен мероприятийĕсене хирĕç тăракан француз хресченĕсене «таркăн салтаксене тыткаланă пек тыткалĕç», теççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Веллингтон» йышши бомбардировщиксем Неапольри доксене тапăннă.

Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Амьен çывăхĕнчи Пуа аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă. Çав çĕрлех тăшман территорийĕнчи чугунçул обьекчĕсене тата Франци çыранĕ çумĕнчи баржăсемпе топпеда катерне атакăланă.

Италире поражени тӳсес шухăш-кăмăлсемпе фашистсене хирĕçле шухăш-кăмăлсем ӳсеççĕ

СТАМБУЛ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Итальянецсен «Пополо д'Италиа» ятлă фашистла хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Империя хулинче (Италин çурçĕр пайĕнче) вăтам шкулта вĕрентекен хĕрарăм Аделина Белияна арестленĕ, вăл «пурин умĕнчех поражени тӳсес шухăшсем каласа панă тата çак вăрçă Италишĕн катастрофăпа пĕтесси çинчен темиçе хут та каланă». Хаçат каланă тăрăх, «çав хĕрарăм фашистсене хирĕçле шухăшсем сарас тĕлĕшпе хăй шкулта ĕçленипе анлăн усă курнă». Хаçат каланă тăрăх, çав хуларах «поражени тӳсес шухăш-кăмăлсемпе фашистсене хирĕçле шухăш-кăмăлсемшĕн» пĕр Джиованни Баттиста ятлă çынна арестленĕ.

Итали хаçачĕсенче çавăн пек пĕлтерӳсем кашни кун тенĕ пекех пичетленеççĕ. «Коррьере делла сера» хаçат нумаях пулмасть çапла пĕлтернĕ: Туринра Мария Кроче ятлă çынна 5 çуллăха концлагере хупмалла тунă, ăна «ют çĕршывсенчен паракан радиопередачăсене яланах итленĕ, вăрçă ĕçĕсене тата фашистла режима критикăланă» тесе айăпланă. Фоджа хулинче (Апулире) хулара пурăнакан 5 çынна çав айăппах тĕрмере нумай вăхăт хушши лармалла суд тунă, Пиаченца хулинче икĕ çынна арестленĕ, вĕсен хушамачĕсене кăтартмаççĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Хусанти Юридически Институт 1-мĕш курса студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Институт суд, прокуратура, арбитраж, адвокатура органĕсенче тата Юстици халăх комиссариачĕсенче ĕçлеме пысăк квалификациллĕ юристсем хатĕрлет.

Иститутăн хăйне уйрăм столовăй тата подсобнăй хуçалăх пур. Ытти вырăнсенчен килнĕ студентсем валли общежити пур.

Институт адресĕ çапла: Хусан хули, Дзержински урамĕ, 22-мĕш номерлĕ çурт, приемнăй комисси.

2—1

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи вырăнти топливо промышленноçĕн управленине вăрман çулĕç стрительствине пĕлекен инженер е техник кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Хĕрлĕ Площадь, 2-мĕш №-лĕ çурт.

Çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисемшĕн куллен тăрăшмалла

Çар çыннисен çемьисене государство пулăшăвне парас тата пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлекен райсоветсемпе хула совечĕсенчи отделсем 4 уйăх çурă хушшинче пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Çар çыннисен çемьисене 34.500 пăт апат-çимĕç, 186.265 тенкĕ укçа, 33.054 кубометр вутă парса пулăшнă. Кунсăр пуçне вĕсене 4.515 пуç выльăх-чĕрлĕх, 21 ĕне тата 15.373 пăт выльăх апачĕ панă. Еçсыннисем хушшинче пухса, мастерскойсенче туса 3.550 мăшăр урана тăхăнмалли япаласем, 8.022 комплект тумтир, 41.264 комплект кĕпе-йĕм хатĕрленĕ, суту-илӳ организацийĕсем 14.680 метр мануфактура, 2.118 комплект тумтир тата ытти те сутнă.

Çар çыннисен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăхра 30.476 çемьене тĕрлĕ майсемпе пулăшнă: апат-çимĕç фондне 55.974 пăт тырă, 450.000 тенкĕ укçа пухса панă. Отделсем ĕçлеме пуçланăранпа 5.000 çынна ытла ĕçе вырнаçтарнă, 367 хваттер юсанă, 180 çемьене çĕнĕ хваттерсем панă, 468 ачана яслисене вырнаçтарнă, чылай çемьесене столовăйсенчен апат парса тăмалла тунă. Çар çыннисен çемьисене пахча-çимĕç лартса хăварма вăрлăх панă. Çапла вара çар çыннисен çемьисем кăçал пурте пахча-çимĕç лартса хăварнă.

Отделсем ĕçлеме пуçланăранпа, пĕтĕмĕшпе илсен, ĕççыннисен жалобисене пăхса тухас тата льготăсем парас ĕçри йĕркесĕрлĕхе пĕтерес тĕлешпе малтанхи утăмсем тунă, пособисемпе пенсисем парас ĕçри йăнăшсене тӳрлетнĕ.

Çакăнпа пĕрлех çар çынни çемьисен нушисемпе ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре пысăк ситменлĕхсем пур-ха. Комсомольски, Канаш тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенче фронтовиксен çемьисен нушисемпе ыйтăвĕсене çителĕксĕр тивĕçтерсе пыраççĕ.

Канаш районĕнче пособисем парас йĕркене тата льготăсем памалли законна пăснă. Районра пособи илсе тăракан 121 çынна тата 1-мĕшпе 2-мĕш группăри 229 инвалида законсăр 151.857 тенкĕ çар налогĕ тӳлемелле тунă. Кунсăр пуçне çĕнĕрен пособи памалла тунă е Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ çынсене 119.393 тенкĕ çар налогĕ тӳлеттернĕ т. ыт. те. Пособи памалла тăвас ыйтăва вăхăтра пăхса тухман, пособи укçине питех те кая юлса тӳлесе тăнă. Çар çыннисен çемьисенче ултăнусем пулнине тăтăмах тĕрĕслесе тăман. Çавна пула унта икĕ ялсоветĕнче кăна 9—11 уйăх хушшинче 20 çемьене тивĕççĕрех 11.553 тенкĕ пособи укçи тӳленĕ.

Фронтовиксен çемьисен нушисемпе ыйтăвĕсене тивĕçтересси çине чунсăрла пăхнăшăн Совнарком апрель уйăхĕнче Канаш райсовет исполкомĕн председательне Ярандайкин юлташа ĕçрен хăтарчĕ. Апла пулин те район руководителĕсем çакăнтан тивĕçлĕ вывод туман, ку ĕçри ситменлĕхсене халĕ те тĕппипех пĕтермен-ха.

Канаш райсовет исполком председателĕн заместителĕ Краснов юлташ: «Пирĕн районра çар çыннисен çемьисем урана тăхăнмалли япаласем тата куллен кирлĕ таварсем ыйтнине тивĕçтерме майсем çук»,—тесе ӳпкелешрĕ. Ку пачах тĕрĕс мар. Районра атă-пушмак юсакан мастерскойсемпе куллен кирлĕ таварсем кăларакан артельсем пур. Вĕсен ĕçне тĕппрен йĕркелесен, паллах, ĕç чылай лайăхланать.

Кунсăр пуçне эвакуаци йĕркипе килнĕ çемьесене çăкăр тата ытти продуктсем йĕркеллĕ парса тăмаççĕ. Краснов юлташ ку ĕçри чăрмава та «райсоюз работникĕсем çаврăнăçусăр ĕçленипе» тата «лашасем тивĕçменнипе» ăнлантарса пама пăхрĕ.

Çар çыннисен эвакуаци йĕркипе килнĕ çемьисене çăкăр тата ытти продуктсем парса пулăшас ĕçре уйрăмах Комсомольски районра пысăк чăрмавсем пур.

Районри организацисене çар çыннисен çемьисенчен тăтăшах жалобăсем пырса тăраççĕ. Анчах унта жалобăсене вăхăтра пăхса тухса тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. ВКП(б) райкомĕнче çар çыннисен жалобисене учета илсе пымалли журнал пур. Унта кăçал 12 жалоба пынине çырса хунă. Анчах шкафра, ытти хутсем хушшинче, татах 6 жалоба тупнă. Çак 18 жалобăран пĕр жалобине çухатнă. Февраль уйăхĕнче панă 5 жалобăран майăн 20-мĕшĕчченех пăхса тухман.

Райисполкомра вара жалобăсене учета та илмен. Январь уйăхĕнче панă 4 жалоба çухалнă. Çавăн пекех районри финанс органĕ те льгота илме панă заявленисене вăхăтра пăхса тухман. Хăшпĕр колхоз правленийĕсем тата ялсовет исполкомĕсем çар çынни çемьисен, уйрăмах эвакуаци йĕркипе килнĕ çемьесен нушисене тивĕçтересси çине чунсăрла-бюрократла пăхаççĕ.

Çак ситменлĕхсем ВКП(б) райкомĕ те, райсовет исполкомне те нимĕн чухлĕ те хумхантармаççĕ пулас. Çавăнпа районра çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе халĕ те татăклă улшăну туни курăнмасть.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи чылай колхозсен председателĕсем фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшас ответлăха хăйсем çинчен сирнĕ.

Хăшпĕр районсенче çар çыннисен çемьисем валли уйăрса панă продуктсене аяккалла салатаççĕ. Красноармейски районра, сăмахран, райсовет исполкомĕн председателĕ хушнă тăрăх районри активра çав фондран 22 килограмм çу салатса панă.

Чăваш АССР Наркомторгĕ тата республикăри çыхăну Управленийĕ çар çынни çемьисен жалобисене пăхса тухассине вăраха тăсаççĕ. Жалобăсене учета илсе пыни çук. Хăшпĕр чухне жалобăсене 3—7-шер уйăх пăхса тухмасăр вырттараççĕ. Ларионовпа Воронин юлташсем жалобăсем тăрăх мĕнле мерăсем йышăннине тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Куславкка, Шăхасан, Етĕрне райисполкомĕсем çар çыннисен çемьисене государство пулăшăвне парас тата вĕсен пурнăçпа йăла условисене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсене ĕç условийĕсем туса паман (уйрăм пӳлĕмсем çук, инвентарьсем çителĕксĕр, телефонсем çук т. ыт. те).

Отделсен ĕçĕнчи тĕп ситменлĕх вăл — мĕнпур ĕçе пособисемпе вăхăтлăх пулăшу панипе çеç чарса лартнинче, çар çыннисен çемьисене пулăшмалли çĕнĕ майсем шырама тăрăшманнинче пулса тăрать. Вĕсен çар çыннисен çемьисене, эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсене ĕçе вырнаçма, çĕнĕ профессисене вĕренсе алла илме пулăшмалла. Çар çыннисен арăмĕсене предприятисемпе учрежденисенче йĕркеллĕн ĕçлеме условисем туса парасси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Вĕсен пĕчĕк ачисене яслисемпе площадкăсене вырнаçтармалла.

Отделсен пособи тата пенси памалли закона пĕр пăркаланмасăр, тĕрĕс пурнăçласа пымалла. Пособи е пенси памасăр пурăнни е ытлашши пани пачах пулмалла мар.

Ку тĕлĕшпе пирĕн питех те пысăк ситменлĕхсем пур-ха. Нумай пулмасть туса ирттернĕ тĕрĕслӳ вăхăтĕнче республикăра пособи укçи 313.521 тенкĕ ытлашши тӳленине палăртнă. Çав вăхăтрах пособи илме тивĕçлĕ çемьесене 88.532 тенкĕ тӳлемесĕр тăнă. Ку ĕç уйрăмах Çĕмĕрле, Етĕрне, Сĕнтĕр, Советски, Калинино районĕсенче япăх тăрать. Çĕмĕрле районĕнче пособи укçи 72.183 тенкĕ ытлашши тӳленĕ.

Çар çыннисен çемьисемшĕн тăрăшасси — куллен тумалли ĕç. Вырăнти партипе совет органĕсем тата комсомолпа профсоюз организацисем ку ĕçе тĕппренех лайăхлатма тивĕçлĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

... промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.